28-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1945
ИЮЛЬ
6
ЭРНЕКУН
1[illegible]9 ([illegible]880) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) Обкомӗпе Шупашкар хула комитечӗн, ЧАССР Верховный Совечӗн тата Шупашкар хула Совечӗн хаҫачӗ

Чӑваш АССР 1-мӗш созыври Верховный Совечӗн IX-мӗш сессийӗ

Чӑваш АССР 1-мӗш созыври Верховный Совечӗн IX-мӗш сессийӗн 1945 ҫулхи июлӗн 4—5-мӗшӗсенче пулнӑ ларӑвӗсем ҫинчен

Информациллӗ пӗлтерӳ

1945 ҫулхи июлӗн 4-мӗшӗнче, 6 сехетре каҫхине, Шупашкарта, Советсен Ҫурчӗн лару залӗнче Чӑваш АССР-ӗн 1-мӗш созыври Верховный Совечӗн IX-мӗш сессийӗ уҫӑлчӗ.

Сессие Чӑваш АССР Верховный Совечӗн Председателӗ **Н. П. Павлов** депутат уҫрӗ.

Н. П. Павлов юлташ Чӑваш АССР Верховный Совечӗн IX-мӗш сессийӗнче пӑхса тухма тӑратнӑ ыйтусене вуласа парать.

И. П. Петров депутат Чӑваш АССР Верховный Советне пӑхса тухма сӗннӗ ыйтусене Чӑваш АССР Верховный Совечӗн IX-мӗш сессийӗн кун йӗркине кӗртме сӗнет.

Чӑваш АССР Верховный Совечӗ пӗр саслӑ пулса ҫакӑн пек кун йӗрки йышӑнать:

1. Чӑваш АССР-ӗн 1944 ҫулхи бюджетне мӗнле пурнӑҫа кӗртни тата Чӑваш АССР-ӗн 1945 ҫулхи бюджетне ҫирӗплетесси ҫинчен.

2. Чӑваш АССР Верховный Совечӗн Президиумӗ VIII-мӗшпе IX-мӗш сессисем хушшинче кӑларнӑ Указсене, Чӑваш АССР Верховный Советӗнче ҫирӗплетме тивӗҫлӗскерсене, ҫирӗплетесси.

Сессин кун йӗркинчи 1-мӗш пункт тӑрӑх—Чӑваш АССР-ӗн 1944 ҫулхи бюджетне мӗнле тултарни тата Чӑваш АССР-ӗн 1945 ҫулхи бюджетне ҫирӗплетесси ҫинчен—Чӑваш АССР Финанс Халӑх Комиссарӗ **И. И. Золотников** юлташ доклад туса пачӗ.

Унтан Чӑваш АССР Верховный Совечӗ Бюджет комиссийӗн председателӗн **К. Д. Медянин** депутатӑн кун йӗркинчи 1-мӗш пункт тӑрӑх—Чӑваш АССР-ӗн 1944 ҫулхи бюджетне мӗнле тултарни тата Чӑваш АССР 1945 ҫулхи бюджетне ҫирӗплетесси ҫинчен—тунӑ содокладне итлерӗ.

Ҫакӑнпа вара Чӑваш АССР Верховный Совечӗн IX-мӗш сессийӗн 1-мӗш ларӑвӗ хупӑнать.

* * *

Июлӗн 5-мӗшӗнче, иркипе 11 сехетре, Шупашкарта, Советсен Ҫурчӗн лару залӗнче, Чӑваш АССР Верховный Совечӗн IX-мӗш сессийӗн иккӗмӗш ларӑвӗ пулса иртрӗ.

Ларӑва Чӑваш АССР Верховный Совечӗн председателӗ **Н. П. Павлов** юлташ ертсе пычӗ.

Кун йӗркинче—Чӑваш АССР-ӗн 1944 ҫулхи бюджетне пурнӑҫлани ҫинчен тата 1945 ҫулхи бюджетне ҫирӗплетесси ҫинчен тунӑ доклада сӳтсе-явасси.

Пренире ҫаксем тухса каларӗҫ: ӗҫҫынни депутачӗсен Шупашкар хула Совечӗн Исполкомӗн председателӗ **П. И. Аникин** юлташ, Чӑваш АССР Верховный Совечӗн депутачӗ **Е. И. Одинцов** юлташ, ӗҫҫынни депутачӗсен Елчӗк райсовечӗн Исполкомӗн председателӗ **З. С. Осипов** юлташ, депутат **А. Е. Ефремов** юлташ, депутат **Б. И. Елисеев** юлташ, Чӑваш АССР-ӗн Апат-ҫимӗҫ промышленность Халӑх Комиссарӗ **П. И. Калинкина** юлташ, депутат **А. М. Михайлова** юлташ, ӗҫҫынни депутачӗсен Шӑмӑршӑ райсовечӗн Исполкомӗн председателӗ **И. С. Подклетнов** юлташ, Чӑваш АССР-ӗн Ҫутӗҫ Халӑх Комиссарӗ **М. П. Макаров** юлташ, депутат **К. А. Бычкова** юлташ, Чӑваш АССР-ӗн Суту-илӳ Халӑх Комиссарӗ **И. Т. Братчиков** юлташ.

Ҫакӑнпа сессин иккӗмӗш ларӑвӗ хупӑнчӗ.

* * *

Июлӗн 5-мӗшӗнче, каҫхине 6 сехетре, Советсен Ҫурчӗн лару залӗнче Чӑваш АССР Верховный Совечӗн IX-мӗш сессийӗн виҫҫӗмӗш ларӑвӗ пулса иртрӗ.

Ларӑва Чӑваш АССР Верховный Совечӗн председателӗ **Н. П. Павлов** юлташ ертсе пырать.

Кун йӗркинче—Чӑваш АССР-ӗн 1944 ҫулхи бюджетне мӗнле пурнӑҫлани ҫинчен тата унӑн 1945 ҫулхи бюджетне ҫирӗплетесси ҫинчен тунӑ доклада малалла сӳтсе-явасси.

Пренире ҫаксем сӑмах тухса каларӗҫ: Чӑваш АССР-ӗн сывлӑх Халӑх Комиссарӗ **А. И. Лихачев** юлташ тата Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн председателӗ **А. М. Матвеев** юлташ.

Чӑваш АССР Верховный Совечӗ Чӑваш АССР-ӗн Финанс Халӑх Комиссарӗн **Золотников** юлташӑн юлашки сӑмахне тата Чӑваш АССР Верховный Совечӗн Бюджет Комиссийӗн председателӗн **К. Д. Медянинӑн** юлашки сӑмахне итлет.

Унтан Чӑваш АССР Врховный Совечӗ Чӑваш АССР-ӗн 1944 ҫулхи бюджетне мӗнле пурнӑҫлани ҫинчен тата унӑн 1945 ҫулхи бюджетне ҫирӗплетесси ҫинчен калакан Закона ҫирӗплетме пуҫлать.

Чӑваш АССР Верховный Совечӗ, статьясене уйрӑмӑн вуласа тухса, Чӑваш АССР-ӗн 1944 ҫулхи бюджетне мӗнле пурнӑҫлани ҫинчен тата унӑн 1945 ҫулхи бюджетне ҫирӗплетесси ҫинчен калакан закона пӗрсаслӑн ҫирӗплетет.

Унтан сесси кун йӗркинчи иккӗмӗш ыйтӑва—Чӑваш АССР Верховный Совечӗн Президиумӗ VIII-мӗшпе IX-мӗш сессисем хушшинчи вӑхӑтра йышӑннӑ Указсене ҫирӗплетессине пӑхса тухма пуҫлать.

Ҫак ыйтупа Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ **А. И. Измайлов** юлташ доклад тӑвать.

Чӑваш АССР Верховный Совечӗ Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн ҫак Указӗсене ҫирӗплетет: **И. Н. Широв** юлташа Чӑваш АССР-ӗн Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссарӗ пулма уйӑрса лартасси ҫинчен тата **М. А. Алексеев** юлташа Чӑваш АССР-ӗн юстици Халӑх Комиссарӗ пулма уйӑрса лартасси ҫинчен.

Ҫакӑн хыҫҫӑн Чӑваш АССР Верховный Совечӗн Председателӗ **Н. П. Павлов** юлташ, Чӑваш АССР Верховный Совечӗн IX-мӗш сессийӗ хӑйӗн ӗҫӗсене пӗтерни ҫинчен пӗлтерет те сессие хупать.

Чӑваш АССР 1-мӗш созыври Верховный Совечӗн IX-мӗш сессийӗ

Июлӗн 4-мӗшӗнче, Шупашкарта Советсен Ҫурчӗн лару залӗнче Чӑваш АССР-ӗн 1-мӗш созыври Верховный Совечӗн IX-мӗш сессийӗ уҫӑлчӗ.

6 сехетре каҫхине Чӑваш АССР Верховный Совечӗн председателӗ **Н. П. Павлов** депутат Чӑваш АССР Верховный Совечӗн IX-мӗш сессийӗ уҫӑлни ҫинчен пӗлтерет.

Павлов юлташ сессире пӑхса тухма ҫакӑн пек ыйтусене тӑратни ҫинчен пӗлтерет:

1. Чӑваш АССР-ӗн 1944 ҫулхи бюджетне мӗнле тултарни тата Чӑваш АССР-ӗн 1945 ҫулхи бюджечӗ ҫинчен.

2. Чӑваш АССР Верховный Совечӗн Президиумӗ VIII-мӗшпе IX-мӗш сессисем хушшинче кӑларнӑ Указсене, Чӑваш АССР Верховный Совечӗ ҫирӗплетме тивӗҫлӗскерсене, ҫирӗплетесси.

Сӗннӗ кун йӗркине йышӑннӑ хыҫҫӑн, Чӑваш АССР-ӗн 1944 ҫулхи бюджетне тултарни тата Чӑваш АССР-ӗн 1945 ҫулхи бюджетне ҫирӗплетесси ҫинчен доклад тума Чӑваш АССР Финанс Халӑх Комиссарӗ **И. И. Золотников** юлташ сӑмах илет.

— Депутат юлташсем! Чӑваш АССР-ӗ, аслӑ Совет Союзӗн уйрӑлми пайӗ пулса тӑраканскер, — тет Золотников юлташ, — 25 ҫул хушшинче чечекленекен республика пулса тӑчӗ. Чӑваш республикин халӑх хуҫалӑхӗпе культури ҫулран ҫул ӳссе ҫирӗпленсе пырать. Чӑваш республикинчи промышленность вӑрҫӑ ҫулӗсенче ҫӗнӗрен предприятисем туса лартнипе пула тата фронт сывӑхӗнчен куҫарса килнӗ предприятисене ӗҫе янипе пула питӗ вӑйлӑн аталанчӗ.

Пирӗн 1922 ҫулта тунӑ 1-мӗш бюджета 390.800 тенкӗлӗх кӑна пурнӑҫланӑ. Вӑрҫӑ пуҫланас умӗнхи 1940 ҫулти бюджета 146.146.000 тенкӗлӗх пурнӑҫланӑ. 1944 ҫулхи бюджета вара 155.610.000 тенкӗлӗх пурнӑҫланӑ. Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи тӑватӑ ҫул хушшинче кӑна пирӗн республикӑри халӑх хуҫалӑхне вырӑнти бюджетран 59 миллион тенкӗ, социальнӑй тата культура тӗлӗшӗнчи мероприятисене 395 миллион тенкӗ хывнӑ.

— Пирӗн ҫӗршывра,—тет Золотников юлташ,—бюджет халӑх хуҫалӑхӗпе культурӑпа вӗсӗмсӗрех ҫитӗнтерсе пырас ӗҫе пулӑшать, ӗҫҫынни массисен пурнӑҫ условийӗсене малалла лайӑхлатас ӗҫе пулӑшса пырать.

Чӑваш АССР-ӗн 1944 ҫулхи бюджетне мӗнле пурнӑҫлани ҫинчен каланӑ май Золотников юлташ ҫакна палӑртрӗ: 1944 ҫулта республикӑри бюджета тупӑшсем тӑрӑх 161.297 пин тенкӗ, тӑкаксем тӑрӑх 155.610 тенкӗ пурнӑҫланӑ.

Республика бюджетне тупӑшсем тӑрӑх 103,7 процент, райсовет исполкомӗсене пӑхӑнса тӑман хуласен бюджетне—79,2 процент, райсовет исполкомӗсене пӑхӑнса тӑракан хуласен бюджетне—101,9 процент, районсен бюджетне—100,8 процент тултарнӑ. Куславкка, Красноармейски, Сӗнтӗрвӑрри, Муркаш, Октябрьски, Советски, Вӑрмар, Ҫӗрпӳ, Шупашкар тата Шӑхасан районӗсем укҫа-тенкӗ пухмалли плана пӗтӗмпех тултарчӗҫ. Апат-ҫимӗҫ, сӑмӑл тата районри промышленноҫсен предприятийӗсем тата Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗн хуҫалӑх органӗсем хӑйсен бюджет умӗнчи обязательствисене ытлашшипех тултарчӗҫ.

Иртнӗ ҫул промышленность бюджета 8.961,4 пин тенкӗ вырӑнне 7.970,4 пин тенкӗ кӑна пачӗ. Вырӑнти топливо тата вӑрман промышленноҫӗсем, Пулӑ тресчӗ, Коммунальнӑй хуҫалӑх наркомачӗн предприятийӗсем, Автотранспорт управленийӗ, Суту-илӳ Халӑх Комиссариачӗ тата Кинофикаци управленийӗ бюджета укҫа-тенкӗ парас плана чылай тултараймарӗҫ.

— Промышленноҫӑн ҫак отраҫлӗсен предприятийӗсемпе организацийӗсем, — тет малалла докладчик,—халӗ те тӑкаклӑ ӗҫлеҫҫӗ, государство укҫа-тенкине усӑсӑр салатаҫҫӗ, продукцин хӑйне ларакан хакне ӳстереҫҫӗ.

Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ ҫулӗсенче пирӗн республикӑри ӗҫҫыннисем Государствӑн Военнӑй заемӗсене тата укҫапа япала лотерейисене сарас ӗҫе активлӑн хутшӑнчӗҫ. Государствӑн тӑваттӑмӗш военнӑй заемне те, иртнӗ ҫулсенчи пекех, темиҫе кун хушшинче сарса пӗтернӗ. Ку заема республикӑра 139,8 миллион тенкӗлӗх сарнӑ, 55.776 пин тенкӗ укҫине пухнӑ.

— Халӑхӑн укҫа-тенкине социализм строительствин ӗҫне ытларах явӑҫтарас тесе,—тет докладчик,—пумай перекет кассисен хӑйсен ӗҫне тӗпренех лайӑхлатмалла, хӑйсен укҫисене перекет кассинче тытса усракан ҫынсене тата заем тытакан ҫынсене перекет кассисем енчен паракан пулӑшӑва вӑйлатмалла.

Унтан докладчик Чӑваш АССР-ӗн 1945 ҫулхи бюджечӗ ҫинчен каласа парать.

— Чӑваш АССР-ӗн Совнаркомӗ Чӑваш АССР-ӗн 1945 ҫулхи бюджетне 186.151.100 тенкӗ палӑртрӗ. Ку ӗнтӗ пӗлтӗрхинчен 30.551.000 тенкӗ ытларах пулать. Золотников юлташ малалла уйрӑм отраҫлӗсем тӑрӑх мӗн чухлӗшер укҫа-тенкӗ памаллине палӑртса тухать. Бюджетра халӑх хуҫалӑхне—17.288,5 пин тенкӗ, социальнӑй тата культура тӗлӗшӗнчи мероприятисене—135.231 пин тенкӗ пама палӑртнӑ. Культурӑна малалла аталантарма 1945 ҫулти бюджетра палӑртнӑ тӑкаксем, вӑрҫӑччӗнхи 1940 ҫулхи бюджетпа танлаштарсан, 37.600 пин тенкӗ ытларах, 1944 ҫулта тунӑ тӑкаксенчен 19 миллион тенкӗ ытларах пулаҫҫӗ. Ҫаксем ӗнтӗ чӑваш халӑхӗн культурипе искусствине малалла аталантарас ӗҫе мӗн тери пысӑк вырӑна хунине лайӑх кӑтартса параҫҫӗ.

Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи тӑватӑ ҫул хушшинче пирӗн республикӑра социальнӑй тата культура тӗлӗшӗнчи мероприятисене вырӑнти бюджетран 395 миллион тенкӗ укҫа панӑ. Кунсӑр пуҫне, аслӑ шкулсене, техникумсене тытса тӑмашкӑн государство бюджетӗнчен вуншар миллион тенкӗ укҫа параҫҫӗ.

— Культура строительствин уйрӑм отраҫлӗсем тӑрӑх илсен,—тет докладчик,—бюджетпа паракан укҫа-тенкӗ ҫакӑн пек валеҫӗнсе тӑрать: халӑха ҫутта кӑларас ӗҫе—96.045 пин тенкӗ, халӑх сывлӑхне упрас ӗҫе—36.405 пин тенкӗ, физкультурӑпа спорт ӗҫне—350 пин тенкӗ, социальнӑй обеспечени ӗҫне — 2.431 пин тенкӗ пама палӑртнӑ.

Халӑха ҫутта кӑларас ӗҫе паракан укҫа-тенкӗ ҫинчен каланӑ май, Золотников юлташ ҫав укҫа-тенкӗн пысӑкрах пайӗ пирӗн ҫамрӑксене вӗрентес тата воспитани парас ӗҫе кайнине асӑрхаттарса хӑварчӗ. Пурне те хут вӗрентес ӗҫе пӗтӗмпе 65.205 пин тенкӗ параҫҫӗ. Кӑҫал шкулсенче 173 пин ҫын, пӗлтӗрхинчен 15.500 ҫын ытларах вӗренмелле. Пирӗн шкулсене пысӑк квалификациллӗ кадрсем кирлӗ. Педучилищӗсене тытса тӑма 4.266 пин тенкӗ параҫҫӗ. Вӗсенче кӑҫал 2.240 ҫын вӗренмелле.

Отечественнӑй вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче хӑйсен ашшӗ-амӑшӗсене ҫухатнӑ ачасене усрамалли ача ҫурчӗсене тытса тӑма 7.024 пин тенкӗ параҫҫӗ. Ача ҫурчӗсенче кӑҫал 2.400 ача пулмалла. Хуласенче тата ялсенче ача сачӗсен шучӗ ӳсмелле. Ача сачӗсене тытса тӑма 3.461 пин тенкӗ параҫҫӗ.

Культурӑпа ҫутӗҫ учрежденийӗсене тытса тӑма 1945 ҫулта 4.636 пин тенкӗ параҫҫӗ, ку ӗнтӗ иртнӗ ҫултинчен 1.666 пин тенкӗ ытларах пулать.

Пирӗн искусствӑна малалла аталантарма паракан укҫа-тенкӗ хисепӗ чылай ӳсет. Ку ӗҫе бюджетран 1.995 пин тенкӗ пама палӑртнӑ.

Халӑх сывлӑхне упрас ӗҫе паракан укҫа-тенкӗ хисепӗ ҫулран ҫул ӳссе пырать. Кӑҫал ку ӗҫе 36.405 пин тенкӗ пама палӑртнӑ. Ку ӗнтӗ иртнӗ ҫултинчен 17,4 процент ытларах пулать. Халӑх сывлӑхне упрас тӗлӗшпе ӗҫлекен учрежденисен хисепӗ 1944 ҫулта вӑрҫӑчченхинчен иртсе кайнӑ. Трахома тата ерекен тӗрлӗрен чир-чӗрсемпе кӗрешмешкӗн хӑйне уйрӑм укҫа-тенкӗ пама палӑртнӑ.

— Пирӗн ҫӗршывра Тӑван ҫӗршыва хӳтӗлекен воинсен ҫемьисемшӗн тата Отечественнӑй вӑрҫӑ инвалидӗсемшӗн хытӑ тӑрӑшаҫҫӗ. Социальнӑй обеспечени енӗпе пулӑшу памашкӑн бюджетра 2.431 пин тенкӗ уйӑрнӑ, ку ӗнтӗ иртнӗ ҫул тӑкакланинчен 300 пин тенке яхӑн ытларах пулать. Партипе правительство ҫар ҫыннисен ҫемьисемпе Отечественнӑй вӑрҫӑ инвалидӗсемшӗн тӑрӑшнине вӗсене налог-

Юлашки 2-мӗш страницӑра.

Чӑваш АССР Верховный Совечӗн республика 25 ҫул тултарнӑ ятпа иртекен уявлӑ сессийӗ 1945 ҫулхи июлӗн 7-мӗшӗнче 12 сехетре кӑнтӑрла Шупашкарти Чӑваш Академиллӗ Театрӗн ҫуртӗнче уҫӑлать.

Чӑвашсен Автономиллӗ Советлӑ Социализмлӑ Республикин 1945 ҫулхи бюджечӗ ҫинчен йышӑннӑ

ЗАКОН

Чӑвашсен Автономиллӗ Советлӑ Социализмлӑ Республикин Верховный Совечӗ ҫапла йышӑнать:

1. Чӑваш АССР-ӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ тӑратнӑ Чӑвашсен Автономиллӗ Советлӑ Социализмлӑ Республикин 1945 ҫулхи бюджетне, Бюджет Комиссийӗн докладчӗ тӑрӑх йышӑннӑ улшӑнусене кӗртсе, тупӑшсемпе тӑкаксем тӑрӑх пӗтӗмпе 186.601,2 пин тенкӗлӗх ҫирӗплетес.

2. Халӑх хуҫалӑхӗн отраҫлӗсем тӑрӑх Чӑваш АССР бюджетне ҫакӑн пек ҫирӗплетес:

Тупӑшсем тӑрӑх:	(пин тенкӗпе)
1. Промышленность	6449,7
2. Ялхуҫалӑхӗ	451,6
3. Вӑрман хуҫалӑхӗ	5083,0
4. Коммунальнӑй тата пурӑнмалли ҫуртйӗр хуҫалӑхӗ	2899,3
5. Автотранспорт	465,0
6. Суту-илӳ	3166,0
7. Пасарсенче суту-илӳ тунӑшӑн пухакан укҫа	1019,5
8. Шкулсенче вӗрентнӗшӗн илекен укҫа	1005,0
9. Вырӑнти налог мар тӗрлӗ тупӑшсем	3480,0
10. Вырӑнти налогсемпе тӳлевсем	12908,5
11. Государство налогӗсенчен тата налог мар тупӑшсенчен уйӑрса панисем	109262,6
12. Государство налогӗсем, тӳлевӗсемпе пошлинӑсем, тӳрех вырӑнти бюджета пырса кӗрекенскерсем	10453,7
13. Хуҫалӑх органӗсем паракан укҫа-тенкӗ	2862,0
14. Самообложени укҫи	3099,3
15. Кинофикацирен кӗрекен тупӑшсем	541,0
16. 1945 ҫулхи январӗн 1-мӗшӗ тӗлне бюджетра юлнӑ укҫа	5113,0
17. Культурӑпа йӑла строительствине районри промышленность паракан укҫа	666,8
18. Районри промышленноҫа аталантарма республикӑри фонда пырса кӗрекен укҫа-тенкӗ	1335,2
19. РСФСР бюджетӗнчен хушса паракан укҫа	16340,0
Пӗтӗмпе тупӑшсем	186.601,2

Тӑкаксем тӑрӑх:	
Промышленность	6208,8
Ялхуҫалӑхӗ	3867,0
Коммунальнӑй тата пурӑнмалли ҫуртйӗр хуҫалӑхӗ	6484,4
Ҫулйӗр хуҫалӑхӗ	300,0
Автотранспорт управленийӗ	77,0
Суту-илӳ	497,0
Ҫыхӑну	376,0
Пӗчӗк юханшывсемпе усӑ курасси	365,0
Строительство организацийӗсем	306,0
Халӑха ҫутта кӑларас ӗҫ	96075,0
Халӑх сывлӑхне сыхлас ӗҫ	36565,0
Физкультурӑпа спорт	350,0
Социальнӑй обеспечени	2531,0
Управлени	24629,2
Ссудӑсемпе заемсем тӗлӗшпе тухакан тӑкаксем	38,0
Госстрах уйӑрса панинчен тӑкаклани	2742,2
Тӗрлӗ тӑкаксем	382,0
Районри промышленноҫа аталантармалли республикӑри фонда уйӑрса паракан укҫа-тенкӗ	667,6
Учительсемпе медицина работникӗсене ӗҫукҫи тӳлемелли резерв	4140,0
Пӗтӗмпе тӑкаксем	186.601,2

3. Ҫак законӑн 1-мӗш статьипе килӗштерсе, Чӑваш АССР бюджетне, йӗркелемелли фондри 656,7 пин тенке шута илсе, тупӑшсемпе тӑкаксем тӑрӑх 43848,3 пин тенкӗ чухлӗ ҫирӗплетес.

4. Районсемпе хуласен 1945 ҫулхи бюджетне тупӑшсемпе тӑкаксем тӑрӑх ҫакӑн чухлӗ ҫирӗплетес (пин тенкӗпе):

Районсемпе хуласем	Вӑл шутра: Тупӑшсемпе тӑкаксем	РСФСР бюджетӗнчен хушса пани	Ытлашши тупӑшсене республикӑри бюджета илни
1. Улатӑр районӗ	3.422,7	242,9	—
2. Элӗк	3.682,1	666,3	—
3. Вӑрнар	4.619,2	666,0	—
4. Йӗпреҫ	4.545,0	808,2	—
5. Ишлей	3.128,6	229,0	—
6. Калинино	3.432,6	518,0	—
7. Канаш	3.645,0	260,9	—
8. Куславкка	4.884,3	242,5	—
9. Комсомольски	3.945,0	638,7	—
10. Хӗрлӗ Чутай	4.232,5	6,6	—
11. Кувакино	2.537,0	325,8	—
12. Красноармейски	3.399,0	146,1	—
13. Сӗнтӗрвӑрри	4.287,4	32,6	—
14. Муркаш	2.988,0	214,4	—
15. Октябрьски	3.787,8	167,2	—
16. Первомайски	3.668,0	306,7	—
17. Пӑрачкав	4.213,0	688,7	—
18. Советски	3.616,4	203,8	—
19. Сӗнтӗр	3.486,0	211,0	—
20. Вӑрмар	5.298,5	278,5	—
21. Ҫӗрпӳ	5.464,0	230,6	—
22. Шупашкар	4.027,0	434,2	—
23. Чкаловски	3.842,5	473,5	—
24. Чурачӑк	2.969,0	92,3	—
25. Шӑмӑршӑ	3.334,5	503,8	—
26. Шӑхасан	3.767,4	346,2	—
27. Ҫӗмӗрле	6.702,6	95,6	—
28. Етӗрне	4.287,0	413,2	—
29. Елчӗк	4.723,5	503,8	—
30. Тӑвай	3.719,4	716,1	—
31. Шупашкар хули	13.079,1	1.522,6	—
32. Канаш хули	3.911,1	—	656,7
33. Улатӑр хули	6.764,4	273,7	—
Пӗтӗмпе	143.409,6	12.459,5	656,7

5. Чӑваш АССР-ӗн республика бюджетне тата районсемпе хуласен бюджечӗсене йӗркелекен тупӑшсенчен мӗн чухлӗ уйӑрса памаллине Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ йышӑннӑ чухлӗ ҫирӗплетес.

6. 1944 ҫулта Чӑваш АССР-ӗн бюджетне пурнӑҫлани ҫинчен тунӑ отчета тупӑшсем тӑрӑх 161.297,0 пин тенкӗлӗх, тӑкаксем тӑрӑх 155.600,6 пин тенкӗлӗх, ҫапла вара тупӑшсем тӑкаксенчен 5.696,4 пин тенкӗ ытларах пулмалла туса ҫирӗплетес.

Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ З. АНДРЕЕВА.

Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1945 ҫулхи июлӗн 5-мӗшӗ.

Чӑваш АССР Верховный Совечӗн Президиумӗ Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗсене уйӑрса лартасси пирки кӑларнӑ Указсене ҫирӗплетесси ҫинчен

Чӑвашсен Автономиллӗ Советлӑ Социализмлӑ Республикин Верховный Совечӗ ҫапла йышӑнать:

Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗ ҫаксене уйӑрса лартасси ҫинчен кӑларнӑ Указсене ҫирӗплетес:

Чӑваш АССР Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссарӗ пулма—Иван Никандрович Широва,

Чӑваш АССР Юстици Халӑх Комиссарӗ пулма—Максим Алексеевич Алексеева.

Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ З. АНДРЕЕВА.

Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1945 ҫулхи июлӗн 5-мӗшӗ.

РСФСР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

ЧӐВАШ АССР-ӗнчи МЕДИЦИНА РАБОТНИКӖСЕНЕ РСФСР ТАВА ТИВӖҪЛӖ ВРАЧӖН ХИСЕПЛӖ ЯТНЕ ПАРАССИ ҪИНЧЕН

Халӑх сывлӑхне сыхлас ӗҫре калама ҫук паха ӗҫсем тунӑшӑн **РСФСР тава тивӗҫлӗ врачӗн** хисеплӗ ятне ҫаксене парас:

1. Прокопий Николаевич Журина — республикӑри санитарипе эпидемиологи станцийӗн директорне.

2. Нина Николаевна Лупповӑна — республикӑри малярии станцийӗн директорне.

3. Петр Николаевич Осипова — Чӑваш АССР 10 ҫул тултарнин ячӗпе тӑракан Шупашкарти поликлиникӑн тӗп врачне.

РСФСР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ Н. ШВЕРНИК.

РСФСР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ П. БАХМУРОВ.

Мускав, 1945 ҫулхи июнӗн 21-мӗшӗ.

СССР Прокуратуринче

СССР Союзӗн Верховный Совечӗн XII-мӗш сессийӗ «Ватӑрах ҫынсене Ҫапӑҫури Ҫартан киле ярасси ҫинчен» калакан закона йышӑннӑ май, СССР Союзӗн Прокурорӗ Юстицин действительнӑй государственнӑй советникӗ К. П. Горшенин приказ кӑларнӑ. Приказра ҫав закона пурнӑҫа тӗрӗс кӗртсе пынине прокуратура органӗсем асӑрхаса тӑмалли ҫинчен каланӑ.

СССР Прокурорӗн приказӗ тӑрӑх, Хӗрлӗ Ҫарӑн Главнӑй прокурорӗ тата пур ҫар прокурорӗсем те ватӑрах ҫынсене Ҫапӑҫури Ҫартан киле вӑхӑтра тата тӗрӗс ярса тӑнине, киле яракансене, закона кӑтартса панӑ пек, тумтир тата атӑ-пушмак пӗтӗм комплекчӗпех парса янине, вӗсене тата укҫа закона кӑтартнӑ чухлех панине пӑхса асӑрхаса тӑмалла.

Чугун ҫул транспорчӗ ҫинчи тата тинӗспе юханшыв флотӗнчи ҫар прокурорӗсем Ҫапӑҫури Ҫартан киле яракансене чугун ҫул ҫинче тата тинӗссемпе юханшывсем ҫинче вӑхӑтра, пӗр чарса тӑмасӑр лартса киле илсе ҫитернине, вӗсене ҫул ҫинче апат-ҫимӗҫ тӗрӗс парса тӑнине асӑрхаса тӑмалла.

Унсӑр пуҫне, СССР Прокурорӗн приказӗ тӑрӑх, прокуратурӑн пур органӗсем те ҫаксене пӑхса асӑрхаса тӑмалла: Ҫапӑҫури Ҫартан киле янӑ ватӑрах ҫынсене, закона кӑтартнӑ пек, пур учрежденисемпе предприятисем те ӗҫ тупса панине, хваттер, вутӑ тупса панине тата ҫак закона ытти енчен те пурнӑҫа мӗнле кӗртсе пынине асӑрхаса тӑмалла.

«Ватӑрах ҫынсене Ҫапӑҫури Ҫартан киле ярасси ҫинчен» калакан закона пӑснӑшӑн айӑплӑ ҫынсене ҫийӗнчех ответ тыттармалла. (ТАСС).

Ҫар ҫыннисен ачисемшӗн тӑрӑшни

РСФСР Ҫутӗҫ Халӑх Комиссариачӗ халӑха ҫутта кӑларас тӗлӗшпе ӗҫлекен вырӑнти органсемпе учрежденисене ҫыру янӑ. Ҫырура ҫапла каланӑ: черетре тӑракан задачӑсенчен пӗри—ҫар ҫыннисен ҫемьисене пур енчен те пулӑшасси пулать, тенӗ.

Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче ашшӗ-амӑшӗсене ҫухатнӑ ачасене шута илес тата вӗсене ача ҫурчӗсене е вӗсене усрама илекен ӗҫҫыннисен ҫемьисене вырнаҫтарас ӗҫе халех туса ҫитермелле. Вилнӗ воинсен ачисене тата Отечественнӑй вӑрҫӑ инвалидӗсен ачисене пӗр уйӑх хушшинче ача сачӗсене вырнаҫтармалла. Ачасене чи малтан ҫуллахи лагерьсемпе ача площадкисене ямалла.

Вӗренӳ ҫулӗ пуҫланиччен ачасене кӗпе-тумтир тата атӑ-пушмак памалла, шкул интерначӗсене вырнаҫтармалла. Ҫар ҫыннисен ачисем валли учебниксем, тетрадьсем, ҫыру япалисем уйӑрса хумалла. Кӗркунне экзамен памалли ачасене испытание хатӗрленме пулӑшу памалла. (ТАСС).

Чăваш АССР 1-мĕш созыври Верховнăй Совечĕн IX-мĕш сессийĕ

Юлашки. Пуçламăшĕ 1-мĕш страницăра.

сем тĕлĕшĕнчен паракан çăмăллăхсем те лайăх кăтартса параççĕ. 1943—1945 çулсенче ялхуçалăх налогĕ, вăрçă вăхăтĕнчи налог тăрăх тата вырăнти налогсем тăрăх вĕсене 273.829 пин тенкĕлĕх çăмăллăх панă. Пособисемпе пенсисем 174 миллион тенкĕ панă.

Чăваш республикинче халăх хуçалăхне 1945 çулта укçа-тенкĕ парасси 25 процент чухлĕ ӳсет. Халăх хуçалăхĕн тĕп отраçлĕсене çакăн чухлĕ укçа-тенкĕ памалла: промышленноçа—5.541,2 пин тенкĕ, ялхуçалăхне—3.867,6 пин тенкĕ, коммунальнăй тата пурăнмалли çуртйĕр хуçалăхне—6.324,3 пин тенкĕ.

Промышленность наркомачĕсенчен Вăрман Халăх Комиссариатне пуринчен ытларах укçа-тенкĕ пама палăртнă. Бюджет тăрăх ăна 4.638 пин тенкĕ памалла. Бюджет тăрăх пама пăхнă ытти укçа-тенке Вырăнти промышленность Халăх Комиссариатне, топливо промышленноçне, стройматериалсен предприятийĕсемпе апатçимĕç промышленноçне памалла. Ялхуçалăхне малалла аталантармашкăн та чылай укçа-тенкĕ пама пăхнă. Çĕрĕç органĕсемпе вырăнти советсен задачи ĕнтĕ çак укçа-тенкĕпе туллин те вырăнлă усă курасси, ăна ялхуçалăхне малалла аталантарас çĕре ярасси пулса тăрать.

Электростанцисене, водопроводсене, мунчасене, гостиницăсемпе колхозник çурчĕсене йĕркеллĕ ĕçлемелле тăвас пулать, кӗперсене, тротуарсемпе çулсене юсамалла, çĕнĕ çуртсем тумалла, пурăнмалли çуртйĕр фондне сыхласа усрамалла, пурăнмалли çуртйĕрсене, чи малтанах çар çыннисен çемьисемпе Отечественнăй вăрçă инвалидĕсем пурăнакан хваттерсене тĕпренех юсамалла.

1945 çулхи бюджетра палăртнă тупăшсем çинчен каланă май, Золотников юлташ çав тупăшсем ăçтан пырса кĕнине кăтартса парать.

Çав тупăшсенчен чылай пысăк вырăна государство налогĕсенчен тата налог мар тупăшсенчен уйăрса панисем йышăнаççĕ. Çак пек тупăшсене бюджетра 109.262 пин тенкĕ палăртнă.

— Çак тупăшсем,—тет докладчик,—пирĕн бюджетра тĕп вырăн йышăнса тăраççĕ. Вĕсене тултарни çавăн пекех тата государство бюджетне тултарнипе те çыхăнса тăрать. Çакă ĕнтĕ мĕнпур наркоматсемпе управленисен, мĕнпур предприятисен, хуçалăх тата суту-илӳ организацийĕсен руководителĕсене, вырăнти советсен исполкомĕсемпе мĕнпур финанс работникĕсене пĕтĕм вăя хурса ĕçлеме хушать.

Докладчик продукцин хăйне ларакан хакне йӳнетес тĕлĕшпе, усăсăр тăкаксемпе сухатусене пĕтерес тĕлĕшпе тата пур çĕре те укçа-тенкĕпе чĕртавара, материалсене перекетлес тĕлĕшпе тăтăклăн ĕçлеме кирли çинчен кăтартса парать.

Юлашкинчен докладчик районсемпе хуласен бюджечĕсем çинчен каласа парать. Районсемпе хуласен бюджетне 43.009,6 пин тенкĕ палăртнă.

Хулари тата районри бюджетран тĕрлĕрен мероприятисене йĕркеллĕ укçа-тенкĕ парса тăрасси, тĕпрен илсен, район совечĕсемпе хула тата ял Совечĕсен исполкомĕсем укçа-тенкĕ пухас плана мĕнле тултарса пынинчен килет. Ĕççыннн депутачĕсен вырăнти совечĕсем хăйсен бюджечĕсене тăвас тата вĕсене тултарас тĕлĕшпе ĕçлессине тĕпренех лайăхлатмалла, хуçалăх органĕсенчи тӳлев тата отчет дисциплинине çирĕплетмелле, халăха совет тенкине перекетлĕн тытма вĕрентмелле тата государство укçи-тенкине вырăнлă тăкакланине тĕрĕслесе пымалла.

Содоклад тумашкăн Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн бюджет комиссийĕн председательне **К. Д. Медянин** депутата сăмах параççĕ.

— Чăваш республикин бюджечĕ, тăванла ытти республикăсен тата мĕнпур Совет Союзĕн бюджечĕ пекех, 1944 çулта фронт ыйтнисене майлă пулнă, унăн задачи гитлерла Германие хăвăртрах тата тĕпренех аркатса тăкма пулăшасси пулнă.

Бюджет комиссийĕ, тет содокладчик, 1944 çулхи бюджета тупăшсемпе тăкаксем тĕлĕшĕнчен мĕнле тултарнине улăштарас тĕлĕшпе нимĕн те сĕнмест, Верховнăй Совета Чăваш АССР Совнаркомĕ тăратнă отчета çирĕплетме ыйтать.

Сессие пăхса тухма тăратнă 1945 çулхи бюджет çинчен Медянин юлташ çапла калать:

— Бюджет комиссийĕ çапла шутлать: Чăваш республикин 1945 çулхи бюджетне, Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Сире пăхса тухма тăратнăскере, пирĕн республикăн халăх хуçалăх планĕпе килĕштерсе, РСФСР Верховнăй Совечĕн VI-мĕш сессийĕ çирĕплетнĕ РСФСР-ĕн бюджечĕпе килĕштерсе тунă.

Чăваш АССР-ĕн 1945 çулхи бюджетне Халăх Комиссарĕсен Совечĕ тупăшсемпе тăкаксем тăрăх 186.150,1 пин тенкĕ йышăннă. Иртнĕ çул пурнăçланă бюджетпа танлаштарсан, ку 15,4 процент ытларах пулать. 1945 çулта пирĕн республикăн хăйĕн тупăшĕсем ӳсни питĕ палăрлă вырăн йышăнса тăрать. 1940 çулта вырăнти тупăшсенчен бюджета 47.564,3 пин тенкĕ кĕнĕ пулсан, 1945 çулта вăл тупăшсем 72.214,1 пин тенке çити ӳсрĕç. Çак хисепсем ĕнтĕ пирĕн республикăри халăх хуçалăхĕ ӳссе пынине питĕ лайăх кăтартса параççĕ. Çакăн пек ӳсĕм промышленноçа, суту-илĕве тата халăх хуçалăхĕн ытти отраçлĕсене малалла аталантарма май туса парать.

Бюджет комиссийĕ çапла шутлать: Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ пирĕн республикăри халăх хуçалăхĕпе культурăн уйрăм отраçлĕсене укçа-тенкĕ парса тăрассине тĕрĕс палăртнă.

Бюджет комиссийĕ ячĕпе содокладчик Чăваш АССР-ĕн 1945 çулхи бюджетне кĕртмелли хăшпĕр тӳрлетӳсене пăхса тухса çирĕплетме тăратать.

Çав тӳрлетӳсем, уйрăмăн илсен, çакăн пек пулмалла: тупăшсем енĕпе бюджета 200 пин тенкĕ ӳстермелле. Ку тупăшсем продукцин хăйне ларакан хакне йӳнетнинчен, нормативсене пĕчĕклетнинчен, планпа пăхман продукцие туса кăларассине ӳстернинчен тата перекетленинчен пулмалла. Суту-илӳ тĕлĕшпе бюджет комиссийĕ тупăшсене 100 пин тенкĕ ӳстерме сĕнет. Ку тупăшсем тавар çаврăнăшĕнче пулакан тăкаксене пĕчĕклетнинчен кĕмелле. Пĕр хут пухакан тӳлевсем шучĕпе тупăша 250 пин тенкĕ ӳстермелле.

Бюджет комиссийĕ Шупашкарти электростанци тӳлемелли 339 пин тенке бюджетăн тупăш пайĕнчен кăларма сĕнет.

Пĕтĕмĕшпе илсен, бюджет комиссийĕ республика бюджечĕн тупăш пайне 789 пин тенкĕ ӳстерме тата 339 пин тенкĕ пĕчĕклетме кирлĕ тесе шутлать. Тăкаксем тĕлĕшпе вăл 100 пин тенкĕ чухлĕ тӳрлетӳ кĕртме сĕнет.

— Бюджет комиссийĕ,—тет Медянин депутат,—Верховнăй Совета çак тӳрлетӳсене йышăнма тата Чăваш АССР-ĕн 1945 çулхи бюджетне тупăшсем енĕпе 186.601.200 пин тенкĕ, тăкаксем енĕпе 186.251.200 тенкĕ çирĕплетме сĕнет.

Медянин юлташăн содокладĕ хыççăн Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн IX-мĕш сессийĕн пĕрремĕш ларăвĕ хупăнать.

* * *

Чăваш АССР 1-мĕш созыври Верховнăй Совечĕн IX-мĕш сессийĕн июлĕн 5-мĕшĕнчи ирхи ларăвĕнче И. И. Золотников юлташăн докладне сӳтсе-яврĕç.

Каçхи ларура «Чăваш АССР-ĕн 1945 çулхи бюджечĕ çинчен Закон» тата Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕ VIII-мĕшпе IX-мĕш сессисем хушшинче кăларнă указсене çирĕплетрĕ.

Çакăнпа Чăваш АССР 1-мĕш созыври Верховнăй Совечĕн IX-мĕш сессийĕ хăйĕн ĕçне пĕтерчĕ.

Аслă шкулсемпе техникумсенче сентябрĕн 1-мĕшĕнче вĕрентме пуçлаççĕ

СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Аслă шкул комитечĕ йышăннă тăрăх, аслă шкулсемпе техникумсенче кăçал сентябрĕн 1-мĕшĕнче вĕрентме пуçламалла. Аслă шкулсен студенчĕсемпе техникумсенче вĕренекенсене июлĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа сентябрĕн 1-мĕшне çитиччен уйăх çурă хушши кантараççĕ.

Çĕнĕ вĕренӳ çулĕнчен пуçласа, аслă шкулсемпе техникумсенче занятисем вăрçăччен графикпа пулса пымалла: кĕркуннехи семестр—сентябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа январĕн 24-мĕшне çитиччен, хĕллехи каникулсем—январĕн 21-мĕшĕнчен пуçласа февралĕн 6-мĕшне çитиччен, çуркуннехи семестр—февралĕн 7-мĕшĕнчен пуçласа июнĕн 30-мĕшне çитиччен пулмалла.

1945 çулта аслă шкулсемпе техникумсене çак сроксенче илмелле тунă: заявленисене августăн 15-мĕшне çитиччен йышăнаççĕ, вĕренме илмелли экзаменсем августăн 1-мĕшĕпе 25-мĕшĕ хушшинче пулаççĕ. Студентсене илесси августăн 25-мĕшĕпе 30-мĕшĕ хушшинче пулса иртмелле, йышăну правилисем тăрăх экзамен тыттармасăр илекенсене августăн 15-мĕшĕччен илмелле. Пушă вырăнсене сентябрĕн 10-мĕшĕччен илме юрать. Сентябрĕн 10-мĕшĕччен вĕренме пыман çынсене списокран кăларса пăрахаççĕ.

Государство, кооперапи тата общество предприятийĕсене, организацийĕсене тата учрежденийĕсене аслă шкулсемпе техникумсене экзамен пама каймалли вăхăта ĕçукçи тӳлемесĕр отпуск пама хушнă. Аслă шкулсемпе техникумсене вĕренме илнĕ çынсене вĕренӳ пуçланиччен 10 кун малтан ĕçрен хăтармалла. (ТАСС).

Заочник-учительсен çуллахи сессине лайăх ирттерер

Июлĕн 5-мĕшĕпе августăн 8-мĕшĕ хушшинче Сĕнтĕрвăрринче Чăвашсен педагогика тата учительсен институчĕсенче заочно вĕренекенсен çуллахи сессийĕ пулса иртет. Сессире заочник-учительсен практикăллă занятисенче пулмалла, консультацисем илсе зачетсемпе экзаменсем памалла.

Сессине институт чĕннĕ пур заочниксен те вăхăтра пухăнмалла. Отечественнăй вăрçă çулĕсенче фронта кайнă пирхи заочниксен шутĕнчен тухса ӳкнĕ учительсен, халĕ киле таврăннă пулсан, сессие чĕнмесĕрех пымалла. Вĕсене заочно вĕренекенсен шутне илеççĕ, малашне вĕренме кирлĕ программăсемпе заданисем параççĕ.

Заочно йĕркепе вĕренекенсен çуллахи сессийĕ заочник-учительсем тата сутĕç пайĕсенче ĕçлекенсем хăйсен пĕлĕвне хăпартассишĕн мĕн таран тăрăшса ĕçленине тĕрĕслемелли экзамен пулса тăрать. Çавăнпа ку ĕçе лайăх хатĕрленсе пымалла. Районсенчи сутĕç пайĕсен заочно вĕренекен учительсене тĕплĕн шута илсе тухмалла, вĕсене сессине тухса кайма пулăшмалла.

Кашни заочникăн хăйпе пĕрле вĕренӳ планĕсене, программăсемпе методикăллă кăтартусене илсе пымалла. Сесси пĕтнĕ тĕле кашни заочникăн малашне мĕнле ĕçлемеллине кăтартакан план пулмалла. Вăл плана институт çирĕплетет. Районти сутĕç пайĕсен заочник-учитель çав план тăрăх мĕнле вĕреннине тĕрĕслесе тăмалла.

Заочно вĕренекен учительсене вĕренӳпе методика кĕнекисем тупса парасси пысăк ыйту. Нумай районсенче сутĕç пайĕсем çавăн пек кĕнекесене тупма çук, теççĕ. Анчах хăшпĕр районсенче заочник-учительсем валли институтран ярса панă библиотекăсемпе усă курмаççĕ. Çĕрпӳ райсутĕç пайĕн заведующийĕ Альбатрос юлташ çав библиотекăна февраль уйăхĕнчех те Шупашкартан илсе кайман.

Иртнĕ вĕренӳ çулĕнче пирĕн республикăри шкулсенче 5—7-мĕш классенче 1.421 учитель, 8—10-мĕш классенче 318 учитель тивĕçлĕ пĕлӳ илмесĕр ачасене вĕрентнĕ. Çакă вăл учительсен пĕлĕвне хăпартас тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлемелли çинчен калать. Шкулта ачасене лайăх пĕлӳ парас пулсан, кашни учителĕн хăйĕн куллен тăрăшса вĕренмелле.

В. ПЕТРОВА,
Чăвашсен педагогика институчĕн директорĕн заочно вĕрентес енĕпе ĕçлекен заместителĕ.

Комсомолецсене „ВЛКСМ" значок параççĕ

ЧУРАЧĂК. Комсомолăн районри пуçламăш организацийĕсенче «ВЛКСМ» значок парас ĕç пысăк çĕкленӳпе пулса пырать. Комсомолецсем, значок пани çине ответлесе, çĕнĕ обязательствăсем илеççĕ, хăйсен ĕçри хастарлăхне татах та ӳстерме пулаççĕ.

Акă, нумаях пулмасть «Красное Сормово» колхозра «ВЛКСМ» значок парас тĕлĕшпе пуху пулса иртрĕ. Пухура значок илнĕ ятпа Григорьев, Иванов, Никитина тата Петров юлташсем тухса каларĕç. Вĕсем халăх хушшинчи политикăллă-массăллă ĕçе малашне татах та ӳстерме, вăйлă тырпул туса илес ĕçре хастарлă ĕçлеме сăмах пачĕç.

Чăх чĕпписем туянаççĕ

СОВЕТСКОЕ. Районри колхозсем Вăрнарти инкубатор станцийĕнчен чăх чĕпписем туянаççĕ. Çак кунсенче кăна «Большевик», «Коминтерн» колхозсем кашниех 100-шер чĕпĕ илчĕç, «Сталинград» колхоз 121 чĕпĕ илчĕ, ытти колхозсем те чăх чĕпписем туянаççĕ.

Уйрăм колхозсем инкубатор станцине чĕпĕсем кăларма çăмарта параççĕ. Степан Разин ячĕпе тăракан колхоз 232 çăмарта, «Новый путь» колхоз 100 çăмарта пачĕç.

Анчах та уйрăм колхозсен кайăк-кĕшĕк фермине чăх-чĕп çукпа пĕрех пулсан та, инкубатора çăмарта памасăр ĕçе чăрмантарса тăраççĕ. «Восход» колхозăн (председателĕ Языков юлташ) фермăра пĕр чăх та çук, анчах та çак колхоз чĕпĕ кăларма инкубатор станцине пĕр çăмарта та паман. Ванькинăри Сталин ячĕпе тăракан колхоз та инкубатора çăмарта парассине тăсса пырать.

К. АРСЕНТЬЕВ.

Хĕвел тĕттĕмленни

Июлĕн 9-мĕшĕнче тунтикун интереслă япала пулать—хĕвел тĕттĕмленет. Хĕвел вăл акă мĕн пирки тĕттĕмленет: уйăх, çĕр тавра çаврăнса çӳресе, хăш чухне пирĕнпе хĕвел хушшинче пулса тухать, çавăн чухне вара вăл хĕвелĕн пĕр пайне е ăна пĕтĕмĕшпех хупласа хурать. Хĕвел тĕттĕмленни тĕрлĕ çĕрте тĕрлĕ курăнать. Уйăх çĕр тавра мĕнле çаврăнса çӳренине пĕлсе тăрса, ученăйсем хĕвел хăçан тĕттĕмленессине çеç мар, вăл ăçта мĕнле курăнассине те малтанах лайăх пĕлсе тăраççĕ.

Июлĕн 9-мĕшĕнче Чăваш республикин кăнтăр районĕсенче тата Мордва республикин çурçĕр районĕсенче хĕвел Мускав вăхăчĕпе 17 сехет те 27 минутпа 28 минут хушшинче йăлтах тĕттĕмленет. Улатăр хули çав тăрăха кĕрет. Улатăрта хĕвел 28 секунда хушши, Ардатовра 43 секунда хушши пĕтĕмпех хупланса тăрать. Унта çĕрлехи пекех тĕттĕм пулать, хĕвел тавра кĕмĕл тĕслĕ çутă курăнать. Шупашкарта хĕвел çаврашкин 70 проценчĕ таран тĕттĕмленет. Кунта вăл 16 сехет те 22 минутпа 18 сехет те 23 минут хушшинче тĕттĕмленет.

Проф. К. ДУБРОВСКИЙ.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ М. И. Калинин Китай республикин Ĕç тăвакан Юань Председательне Сун Цзы-вень господина йышăнни

Июлĕн 4-мĕшĕнче СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ М. И. Калинин Китай республикин Ĕç тăвакан Юань Председательне Сун Цзы-вень господина тата Ют çĕршыв Ĕçĕсен Вице-министрне Ху Ши-цзэ господина йышăннă.

Монголи Халăх Республикин Премьер-Министрĕ Чойболсан маршал Мускава килни

Июлĕн 4-мĕшĕнче Монголи Халăх Республикин Премьер-Министрĕ Чойболсан маршал Мускава килнĕ.

Унпа пĕр вăхăтрах Мускава Совет Союзĕн Монголи Халăх Республикинчи Посланникĕ И. А. Иванов килнĕ.

Центральнăй аэродромра Чойболсан маршала çаксем хирĕç тухса кĕтсе илнĕ: СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕн Заместителĕ Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов, СССР Государство хăрушсăрлăхĕн Халăх Комиссарĕ В. Н. Меркулов, СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ С. А. Лозовский, СССР Тулашри суту-илӳ Халăх Комиссарĕн Заместителĕ Ю. М. Каганович, генерал-полковник Ф. Ф Кузнецов, генерал-лейтенант К. А. Синилов, СССР Наркоминделĕн ответлă сотрудникĕсем Ф. Ф. Молочков, М. Ш. Вахитов.

Хирĕç тухса кĕтсе илнĕ çĕрте çавăн пекех тата Монголи Халăх Республикин Совет Союзĕнчи Посланникĕ Д. Самбу тата Монголи Халăх Республикин миссийĕн сотрудникĕсем пулнă.

Хирĕç тухса кĕтсе илнĕ чухне хурал тăратнă, Монголи Халăх Республикин тата Совет Союзĕн гимнĕсене каланă.

Аэродрома Монголин тата Совет Союзĕн флагĕсене çакса илемлетнĕ.

Ют çĕршыв ученăйĕсем СССР-та пулни çинчен мĕн калаççĕ

ПАРИЖ, июлĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). СССР Наука академийĕ 220 çул тултарнă ятпа ирттернĕ уявран Парижа таврăнсан, Эмиль Борель академик «Монд» хаçатра пысăк статья пичетлесе кăларнă. Июнĕн 24-мĕшĕнче Хĕрлĕ площадьре пулса иртнĕ çар парачĕ çав тери чаплă пулнине палăртса, автор çапла çырать: «Çав çар уявне СССР Наука академийĕпе унăн хăнисене чĕнсе, Совет правительстви СССР Наука академийĕ 220 çул тултарнипе Германи Совет Союзне тапăннăранпа 4 çул тултарнипе пĕр вăхăта килни пысăк вырăн йышăннине палăртрĕ. СССР-та Наука академийĕ питĕ паллă вырăн йышăнса тăрать. Вăл çĕршыври пурнăçăн наукăпа çыхăнса тăракан нумай енĕсене ăнăçлăн ертсе пырать. Наука академийĕн членĕсем çамрăк ученăйсемпе техниксен çарне ертсе пыракансем пулаççĕ, çавна пула СССР-ти пуянлăха тĕпчесе унпа усă курас тĕлĕшпе çав тери пысăк çитĕнӳсем тунă. Академиксен çав ĕçне уйрăмăнах палăртса хăварасси çинчен сăмах хускалсан, нимĕн те манса хăвармаççĕ».

Борель Совет Союзĕнче ученăйсемшĕн çав тери тăрăшнине палăртать.

Француз ученăйĕсен делегацийĕн тепĕр членĕ Коллери профессор пичет представителĕсемпе калаçнă чухне çакна палăртнă: «СССР Наука академийĕн паллă енĕ çакăнта: вăл «таса наукăпа» тата пурнăçран уйăрăлса тăракан тĕпчевсем тунипе çырлахмасть, вăл уйрăмăнах практикăллă ыйтусемпе интересленет. Çавна пула вăл вырăс çĕрĕнчи пуянлăхпа усă курас ĕçре паллă вырăн йышăнса тăнă».

ЛОНДОН, июлĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). СССР Наука академийĕн юбилейĕнче пулнă темиçе ученăй Англие таврăннă май, «Манчестер гардиан» хаçатăн Лондонри корреспонденчĕ çапла çырать: вăл уяв асран кайма пĕлмест, тет. СССР-та пулнă вăхăтра вăл ученăйсем тĕл пулса калаçнă чухне пĕр-пĕрне хăйсен шухăшĕсене пĕлтернĕ. Вăл тĕлпулусем пирĕн ученăйсемшĕн яланах пит кĕске тĕлпулусем пек туйăннă. Англи хăнисем вырăссем хушшинче хăйсен кивĕ тусĕсене тупнă, хăйсемпе пĕр ĕçе туса пыракан вырăссен ĕçĕсемпе паллашнă. Англи ученăйĕсене çав тери чыслăн хăналанă. Вĕсем официальнăй виçĕ банкетра пулнă, вăл банкетсенчен пĕринче Сталин пулнă. Вĕсем оперăпа балет театрĕн чаплă спектаклĕсенче, концертсемпе пьеса постановкисенче пулнă. Ученăйсенчен хăшпĕрисем «чаплă Ленинград хулине» кайни çинчен уйрăмăнах тулли кăмăллă пулса аса илеççĕ.

ГОПКИНС США ПРЕЗИДЕНЧĔН СПЕЦИАЛЬНĂЙ ПОМОЩНИКĔ ПУЛСА ĔÇЛЕМЕЛЛИ ВЫРĂНТАН ТУХНĂ

ВАШИНГТОН, июлĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Шурă Çурт çапла пĕлтернĕ: Гарри Гопкинс США президенчĕн специальнăй помощникĕ пулса ĕçлесе тăнă вырăнтан тухнă.

Шурă Çурт пĕлтернĕ тăрăх, Гарри Гопкинс июлĕн 2-мĕшĕнче Трумэн президента çыру янă. Çав çырура вăл хăйĕн вырăнĕнчен кайма кирлĕ пирки тухма шутлани çинчен каланă. Малалла Гопкинс çапла каланă: çавăнпа та эпĕ президентпа пĕрле çитес конференцие, Черчилль премьер-министрпа тата Сталин премьерпа пĕрле пулмалласкерне, кайма пултараймастăп, тенĕ.

Трумэн президент июлĕн 3-мĕшĕнче Гопкинса ответ çырса янă. Вăл хăйĕн ответĕнче Гопкинс вырăнтан тухнипе килĕшет, анчах та питĕ шеллет. Трумэн президент, Гопкинс тунă чаплă ĕçсене палăртса, малалла çапла каланă: Гопкинс сывлăхĕ часах пĕтĕмпех юсанса çитессе эпĕ шанса тăратăп, вара эпĕ каллех Гопкинс мана хăйĕн канашĕсемпе пулăшса тăрасса шанатăп, тенĕ.

Шурă Çурт çапла пĕлтернĕ: Гарри Гопкинс сывлăх начар пирки «Аслă тройкăн»—Трумэн президентăн, Сталинăн тата Черчиллĕн çитес конференцине кайма пултараймасть, тенĕ.

Шурă Çуртăн пичет ĕçне пăхса тăракан секретарĕ Росс пĕлтернĕ тăрăх, çав конференцие Совет Союзĕнче Америка посолĕ пулса ĕçленĕ Дэвис каясси халĕ паллă мар-ха.

ВИÇĔ ДЕРЖАВА ПУÇЛĂХĔСЕН ÇИТЕС КАНАШЛĂВĔНЧЕ ДЭВИС ПУЛАТЬ

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Шурă Çуртăн пичет ĕçне пăхса тăракан секретарĕ Росс çапла каланă: Совет Союзĕнче Америка посолĕ пулса ĕçленĕ Дэвис «Аслă тройка» канашлăвĕнче пулать, тенĕ.

ФИНЛЯНДИРЕ ТАСАТУ ТУСА ИРТТЕРМЕ ЫЙТАÇÇĔ

ХЕЛЬСИНКИ, июлĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Финляндири радио çапла пĕлтерет: июлĕн 2-мĕшĕнче Хельсинки хулинче рабочисен йышлă митингĕ пулса иртнĕ. Митингра вăрçă преступникĕсем пирки пысăк резолюци йышăннă. Митингра пулнă рабочисем, Финлянди çĕршывĕн шалти политики тата тулашри политики тĕрĕс пулса пытăр тесе, государство аппаратне тасатма ыйтнă, çавăн пекех тата Финлянди çарне, халăха çутта кăларас тĕлĕшпе ĕçлесе тăракан учрежденисене фашистсем майлă çынсенчен тасатма ыйтнă. Митингра çак резолюци çинчен Финлянди правительствине тата сейма та пĕлтермелле тунă.

ХЕЛЬСИНКИ, июлĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Июлĕн 2-мĕшĕнче Хельсинки хулинче Финляндири шведсен сулахай организацийĕсен митингĕ пулса иртнĕ. Митингра тухса каланă чылай ораторсем правительствăпа сейма вăрçа хутшăннăшăн айăплă çынсем пирки ыйтăва татса пама тата общественăллă учрежденисене демократие хирĕçле, шовинистла çынсенчен, вăрçă политикишĕн айăплă çынсенчен тасатма ыйтнă. Пĕр саслăн йышăннă резолюцие правительствăна тата сейм депутачĕсене пама шутлаççĕ. Шведсен халăх партийĕ çак митинга хутшăнма килĕшмен.

БЕЛЬГИ ГОРНЯКĔСЕН ЗАБАСТОВКИ

ПАРИЖ, июлĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Франс пресс агентстви Бельгири «Драпо Руж» ятлă хаçат пичетлесе кăларнă пĕлтерĕве панă. Пĕлтерӳре Боринаж хули патĕнчи çĕркăмрăк шахтисенче тата Бельгин вăтаçĕрти пайĕнче забастовкăсем пуçланса кайни çинчен каланă. Боринажра, хаçат çырнă тăрăх, шахтерсем акă мĕншĕн ĕçлеме пăрахнă: унти шахтăсенче ĕçлеме поляксен тыткăнра пулнă çар çыннисене илсе пынă, анчах та вĕсем хушшинче поляксен Лондонри реакциллĕ правительстви майлă тăракансем чылай пулнă, вĕсем поляксем хушшинче çав майлă пропаганда сарнă. Çавăн пирки те Бельги шахтерĕсем унта забастовка пуçласа янă. Хаçат çырнă тăрăх, Бельги шахтерĕсем çавăн пек çынсене Бельги шахтисенче ĕçлеме ирĕк парасшăн мар. Хаçат çапла çырнă: «Бельги шахтерĕсем фашистсен агенчĕсене чăтса тăрас çук», тенĕ.

ГРЕЦИРЕ МОНАРХИЛЛĔ ПЕРЕВОРОТ ТУМА ХАТĔРЛЕННИ

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, монархист-террористсем, пуян сутăçăсем тата промышленниксем, регентсене кăларса, короле Грецие каялла таварасшăн. Çак çар ушкăнĕн хĕçпăшал та пур, вăл хĕçпăшала нацистлĕ гвардин склачĕсенчен илнĕ.

КĔСКЕН

Франс пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, де Голль генералăн арăмĕ совет хĕрарăмĕсен делегацине чысласа чей ĕçтернĕ. Йышăнура Францин Мускаври посолĕн Катру господинăн арăмĕ тата Богомолова юлташ пулнă. (ТАСС).

Культура çинчен

Октябрьти Социализмлă Аслă революцичченпатша влаçĕ чăваш халăхĕ хушшинче культурăна ӳсме паман. Администрациллĕ пысăкрах центрсенче полици çурчĕ, эрех лавки, чиркӳ ĕлĕкхи саманара тĕп вырăн йышăнса тăнă. Мĕнпур çутă вырăн та сайра çĕрте лартса тухнă шкулсем кăна пулнă. Анчах çав шкулсенче çынсем сахал вĕреннĕ.

Сăмахран, хальхи Куславкка районĕнчи Тулпай ялне илер. Революциччен унта 40 кил хушшинче хут пĕлекенсем пĕтĕмпе те 7—8 çын кăна пулнă. Пĕтĕм тĕнчери пĕрремĕш вăрçă вăхăтĕнче салтак арăмĕсемпе амăшĕсем, хăйсен мăшăрĕсемпе ывăлĕсенчен çырусем илсен, çав çырусене вулаттарма тата çырусем çыртарма кӳрше çӳренĕ. Эпĕ хам та хăшпĕр кун 3—4-шар çыру çырса панă. Унтанпа ĕнтĕ 28 çул иртрĕ. Партипе совет правительстви чăваш халăхĕ хушшинче культурăна ӳстерес тĕлĕшпе пысăк пулăшу пачĕç. Халĕ ялсенче пурте вулама, çырма пĕлеççĕ.

Отечественнăй Аслă вăрçă вăхăтĕнче чăваш ялĕсенчен фронта çынсем нумай кайрĕç. Анчах халĕ хăйсен фронтри тăванĕсенчен илекен çырусене вулаттарма никам та кӳрше çӳремест. Кашни хăйĕн юратнă çыннинчен илнĕ çырăва хăех вулать.

Чăваш ĕççыннийĕсен культурăлăхĕ ӳсни вĕсене хальхи кăткăс çар техникипе, фабрикăсенчи, заводсенчи тата ялхуçалăхĕнчи паха машинăсемпе пĕлсе те тĕрĕс усă курма май парать. Пирĕн совет халăхĕн культурăлăхĕ çӳллĕ пусăмра тăни те ĕнтĕ гитлерла Германие çĕмĕрсе тăкма пулăшрĕ.

Çӳлерехре асăннă Тулпай ялĕ пысăках мар, анчах çав пĕчĕк ялта та ĕлĕкхи саманара çĕм суккăр çынсем сахал пулман. Трахома чирĕ чăваш ачисене çуралнă-çуралманах ернĕ те, вăл вăй питтн çынсемех вара тĕнче çутине курайми пулса ларнă. Тулпай ялĕнче ĕлĕкхи саманара 12 çын, çамрăклах куç çутине çухатнăскерсем, туяпа çӳретчĕç.

Партипе правительство пулăшнипе чăваш халăхĕ çав хăрушă инкеке—трахомăна пĕтерчĕ. Халĕ ĕнтĕ чăваш ялĕсенче суккăр çынсене, уйрăмах çамрăксем хушшинче, питĕ сайра тĕл пулма пулать. Пирĕн ача-пăчасем трахома мĕн иккенне пĕлмеççĕ. Эпир çакăншăн та ĕнтĕ хамăрăн партипе правительствăна тав тума тивĕçлĕ. Трахома чирне тата ытти тĕрлĕ срекен чирсене пĕтерсе пыни халăх сывлăхне çирĕплетрĕ. Гитлерла Германие çĕнтерес ĕçре çакă та ĕнтĕ пысăк вырăн йышăнчĕ.

Пирĕн çĕршывра вырăс халăхĕн культури ытти халăхсен культуринчен маларах тăрать. Совет влаçĕн çулĕсенче вырăс халăхĕн культури пĕтĕм тĕнчипе паларса тăракан чи аслă культура пулса тăчĕ. Ĕлĕкхи саманара халăх хут пĕлмен пирки вырăс чĕлхине те вĕренеймен. Çавна пула вара, ĕлĕкхи çар техники ытлашши кăткăсах пулман пулин те, ăна вырăсла пĕлмен чăваш çыннисем тĕплĕн вĕренсе алла илеймен. Техникăна алла илеймен воин, паллах, ăста воин пулма пултараймасть. Хальхи вăхăтра чăваш ялĕсенче вырăсла пĕлмен çынсем нумай мар.

Социализм строительствинче, Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче пирĕн чăваш çыннисем вырăс чĕлхине пĕлнĕ пирки хальхи кăткăс техникăна, уйрăмах çар техникине, çăмăлраххăн вĕренсе алла илсе пычĕç. Хальхи техника та ĕлĕкхи техника мар. Çавăнпа та ĕнтĕ хĕçпăшала тĕплĕн вĕренсе алла илнĕ воинсем—пирĕн чăваш халăхĕн ывăлĕсем тăшмана çапса аркатас ĕçре хăйсен пысăк паттăрлăхĕпе ăсталăхне кăтартрĕç.

Çакăнтан ĕнтĕ вырăс чĕлхине пĕлни, вырăс культурине ăса илни тăшмана çĕнтерес ĕçре татах пысăк пулăшу панине курма пулать.

Чăваш халăхĕ хушшинчи пурнăçпа йăла лару-тăрăвĕ те тĕпренех улшăнчĕ. Ĕлĕкхи саманара нумай ялсенчи чăваш çыннисем хура пӳртсенче пурăннă, çав пӳртсенче лампа вырăнне хăйкăчă пулнă. Сухăрлă хăйă тĕтĕм мăкăрлантарнă. Ахаль те сывă мар куçа çав тĕтĕм татах та ытларах пăснă. Нумай çынсем ӳпке чирĕпе чирленĕ. Хальхи вăхăтра хăйă вырăнне чăваш çыннин пӳртĕнче краçин лампи çунать. Чылай çĕрте электричество çутăлчĕ.

Хальхи Етĕрне, Хĕрлĕ Чутай, Муркаш, Сĕнтĕр районĕсем йышăнса тăракан ялсенче ĕлĕкхи саманара мунчасем пулман. Мунча—тасалăхăн пĕрремĕш тĕслĕхĕ. Хальхи вăхăта илсен, эпир çав районсенче кашни килхуçин тенĕ пекех мунча пуррине куратпăр. Çакă та ĕнтĕ пирĕн халăхăн сывлăхне упрама пулăшать. Анчах кунта хăшпĕр çитменлĕхсем пирки те каласа хăвармалла. Сăмахран, Советски, Муркаш, Сĕнтĕр районĕсенче мунчасем лартаççĕ пулин те, вĕсене чылайĕшĕсем хисеплесех каймаççĕ. Мунчана пит сайра кĕреççĕ. Çав енчи хĕрарăмсем çуллахи вăхăтра та хура тата хулăм çăмтăла сырса çӳреççĕ. Хура çăмтăла хĕллехи вăхăтра питĕ ăшă та кирлĕ япала. Анчах çулла вăл урана пăсать. Çав енчи хĕрарăмсен урисем, пĕрмаях хулăм çăмтăла сырса çӳренипе, шăрпăк пек çинçелсе юлаççĕ тата час-часах пăсăлса, кĕсенленсе каяççĕ. Пирĕн кивĕ йăларан юлнă ытти çитменлĕхсене те хăвăртрах пĕтермелле. Мĕншĕн тесен вĕсем халăх сывлăхне çирĕплетме, культурăна малалла ӳсме чăрмантараççĕ. Тепĕр каласан, çав çитменлĕхсем çыннăн çутçанталăк панă илемне те пăсаççĕ.

Пирĕн чăваш халăхĕ 25 çул хушшинче культура тĕлĕшĕнчен пысăк çитĕнӳсем турĕ. Анчах пирĕн ĕмĕтсем татах та пысăкрах. Пирĕн мĕнпур халăха вырăссен малта тăракан культурине çити ӳстерессишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлемелле.

И. ОХОТНИКОВ.

Ответлă редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместителĕн — 2—89, секретариатăн — 4—26, пропаганда пайĕн — 2—89, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленность пайĕн — 3—97, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, рабсельсорсен пайĕн — 0—67, издательство конторин — 0—23.

НТ 00631 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2, ф. б. 59 42 п. п. Тираж 16.000